Халăх тата влаç: тĕллевсем те пĕр пек, ĕçсем те пĕрлех

# «Граждансен ыйтăвĕсене тĕпе хуратпăр»

***Пурнăç пĕр вĕçĕм малаллах каять. Тăвас тени пур чухне те пулсах пымасть. Пулăшу кирлĕ самантсем те сахал мар пулаççĕ. Канăç паман ыйтусем те тухсах тăраççĕ. Çавна май район администрацине районта пурăнакансем вăл е ку ыйтупа кĕрсе тухаççĕ, çырусем çыраççĕ. Мĕн хумхантарать паян вĕсене? Çак ыйту тавра калаçрăмăр та ĕнтĕ район администрацийĕн ĕçĕсене йĕркелесе пыракан А.В. КРАСНОВПА.***

**–Александр Валерианович, тепĕр квартал хыçа юлчĕ. Халăх хускатакан ыйтусем сахалланчĕç-и, нумайланчĕç-и?**

–Тӳрех каламалла, иртнĕ çулхи апрель-июнь уйăхĕсемпе танлаштарсан, çырусем палăрмаллах нумайланчĕç. Пĕлтĕр вĕсем 26 пулнă пулсан, кăçал 45 çитрĕç. Çырусенче мĕнле ыйтусене хускатнине кура вĕсене татса пама е тивĕçлĕ хуравсем пама район администрацийĕн структура подразделенийĕсене çитернĕ.

**–Мĕн пăшăрхантарать паян пирĕн районти ял çыннисене?**

–Чи нумай ыйту – çуртйĕрпе çыхăнни. Çав 10 (пĕлтĕр 1 ыйту пулнăччĕ ку темăпа) çыруран ытларахăшĕнче çынсене кивĕ çуртран кăлармалли программăна пурнăçа кĕртессипе интересленеççĕ. Çынсем нумай хваттерлĕ çуртсем аварилле лару-тăрура пулни çинчен çыраççĕ, çурт-йĕр тума е хваттерлĕ пулма пулăшма ыйтаççĕ.

Тепĕр 9 (12) çыру строительствăпа çыхăннăскерсем. Районта пурăнакансем вĕсенче çул, электричество линийĕсене, шыв пăрăхĕсен сечĕсене тăвасси çинчен сăмах хускатаççĕ.

Общество тата патшалăх ыйтăвĕсемпе çыхăннă çырусен шучĕ те 3-рен 9-а çитни районта пурăнакансем пулса иртекен улшăнусем çине епле пăхнине, вĕсене хăйсем майлă хак панине кăтартса парать. Тĕрлĕ справкăсем кирлинчен пуçласа вăл е ку ертӳçĕ ĕçĕпе кăмăлсăр пулнине пĕлтереççĕ, территорине тирпей-илем кĕртес ыйтусене хускатаççĕ.

Ытти çулсенче вĕрентӳ ĕçĕпе çыхăннă ыйтусем ытлашши килсех кайман пулсан (пĕлтĕр çак хушăра 1 ыйту пулнăччĕ), кăçал вĕсем 6 çитрĕç. Çакă районта вĕрентӳ учрежденийĕсен сетьне реструктуризацилессипе çыхăннă. Çавна май хăш-пĕр шкулсен статусне улăштарма лекет. Граждансем хăйсен çырăвĕсенче вырăнти шкулсене упраса хăварма ыйтаççĕ.

Агропромышленность комплексĕпе çыхăннă ыйтусем те палăрмаллах нумайланчĕç. Иртнĕ çулхи çак тапхăрта 1 пулнă пулсан, халĕ– 6. Вĕсен авторĕсем ял хуçалăх предприятийĕсенчи лару-тăрупа кăмăлсăр пулнине палăртаççĕ, вĕсенчен хăшĕ-пĕрин ĕç-хĕлне хутшăнма ыйтаççĕ. Çавăн пекех хресчен (фермер) хуçалăхĕсене йĕркелеме çĕр лаптăкне уйăрса пама ыйтаççĕ.

**–Ыйтусене ытларах хăш вырăнсенче пурăнакансем хускатаççĕ?**

–Çырусем ытларах Муркаш (7), Мăн Сĕнтĕр тата Ярапайкасси (6) ял тăрăхĕсенчен килчĕç. Çатракасси ял тăрăхĕнчен 4 çыру килчĕ, Ильинкăпа Йӳçкасси ял тăрăхĕсенчен – 3-шер, Катькаспа Турай ял тăрăхĕсенчен – 2-шер.

**–Пур ыйтăва та тӳрех татса пама çук-çке.**

–Килнĕ ыйтусенчен 22 процентне татса панă, тепĕр 78 процентĕ тĕлĕшпе авторĕсене тивĕçлĕ хуравсем панă.

Каласа хăвармалла, 2 кварталта килнĕ çырусенчен 12-шĕ (26 процент) район администрацине çӳлте тăракан организацисем урлă килнĕ, 15 (33 процент) çырăва коллективпа çырнă.

Районта пурăнакансем районти лару-тăрупа кăсăкланнине, вăл е ку ыйтăва хускатнине ырламалла кăна. Апла пулсан граждансем маншăн ик айкки те – тăвайкки, тесе алă сулмаççĕ. Çакă район администрацийĕпе халăх хушшинчи çыхăнăва татах та çирĕплетет. Ыйтăвĕсене пирĕн пĕрлех пĕр-пĕрне ăнланса татса памалла-çке. Район администрацине çырсан та, Президент администрацине ярсан та, хамăрăн пурнăçа хамăрăнах лайăхлатмалла пирĕн. Пĕрлехи вăйпа, пĕрле тăрăшса.

**–Район администрацийĕ халăхпа тата урăх мелсемпе те çыхăнса ĕçлет. Çакăн çинче чарăнсан та аванччĕ.**

– Халăхăн ыйтусем нумайланса пынине кура çырусемпе (пĕтĕмпе вара кăçалхи пĕрремĕш çур çулта пĕлтĕрхи çак вăхăтринчен 24 çыру нумайрах – 70 çыру килчĕ: ытларах строительство (16), çурт-йĕр (11), патшалăх тата общество (10) ыйтăвĕсемпе çыхăннăскерсем. Вĕсенчен 27 процентне пурнăçланă, ыттисемпе тивĕçлĕ хуравсем панă) ĕçленипе пĕрлех ял çыннисемпе ирттерекен кашни тĕл пулурах граждансен ыйтăвĕсене тĕпе хураççĕ. Пĕрлехи информаци кунĕсенче те халăх кăмăлне ытларах курма пулать. Унсăр пуçне район администрацийĕн яваплă ĕçченĕсем ял тăрăхĕсен территорийĕсенче çынсене харпăр хăйсен ыйтăвĕсемпе йышăнаççĕ. Июнĕн 17-мĕшĕнче граждансемпе ирттернĕ çакнашкал тĕл пулура 52 ыйту таран пуçтарăнчĕ. Çав ыйтусене татса парас тĕллевпе ирттерекен мероприятисен планне туса хатĕрленĕ. Халĕ акă ятарласа çирĕплетнĕ графикпа килĕшӳллĕн кашни эрне кун ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕ иртет. Çак тĕл пулусем хăш вырăнта мĕнле ыйтусем çивĕч пулнине, вĕсене татса парассипе вăхăта сая ямасăр ĕçлеме пуçлама май парать.

**–Тавах, Александр Валерианович, калаçушăн.**

**Л.ПАВЛОВА калаçнă.**

«Вĕрентӳ» наци проекчĕ

# Пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене мĕнле тытнă?

***11 класран вĕренсе тухнисем малалла вĕренме каяс тесе заявленисем панă ĕнтĕ. Кăшт тăхтасан, аслă шкулсем тата професси пĕлĕвне паракан ытти вĕрентӳ учрежденийĕсем, абитуриентсен экзамен пĕтĕмлетĕвĕсене тишкернĕ хыççăн, вĕренме кĕни те паллă пулĕ. Анчах мĕнле тытнă-ха кăçалхи вунпĕрмĕшсем пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене?***



2008-2009 вĕренӳ çулĕнче пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене пурĕ 314 выпускник тытнă, 1 выпускник – кивĕ мелпех. Вырăс чĕлхипе математика обязательнăй предметсем шутланчĕç.

Муркаш лицейĕнче (вăтам кăтарту 66,07 балл), Орининти вăтам шкулта (65,6), Ильинкăри вăтам шкулта (63,7) вĕренекенсем вырăс чĕлхипе лайăх результатсем кăтартма пултарчĕç. Математикăпа вара Орининти вăтам шкулта вĕренекенсен вăтам кăтартăвĕ – 56,1 балл, Муркаш лицейĕнче вĕренекенсен – 55,52 балл, Нискассинчи вăтам шкулта вĕренекенсен – 53,86 балл.

Тĕрлĕ предметсемпе пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытса Муркаш лицейĕнче, Муркашри, Мăн Сĕнтĕрти, Йӳçкассинчи, Чуманкассинчи, Ильинкăри, Турайĕнчи вăтам шкулсенче вĕренекенсем балсене ыттисенчен ытларах пухма пултарнă. Чи пысăк балсем çаксен: вырăс чĕлхипе – Ольга Лебедева (лицей), математикăпа – Андрей Григорьев (Муркаш шкулĕ), биологипе – Ольга Лебедева (лицей), информатикăпа – Александр Иванов (Москакасси шкулĕ), литературăпа – Лиана Соловьева (Муркаш шкулĕ), географипе – Надежда Алатова (Мăн Сĕнтĕр шкулĕ), акăлчан чĕлхипе – Анастасия Иванова (лицей), химипе – Дмитрий Грачев (Муркаш шкулĕ), физикăпа – Андрей Григорьев (Муркаш шкулĕ), Раççей историйĕпе – Анастасия Иванова (лицей), обществознанипе – Михаил Смирнов (Москакасси шкулĕ), Йӳçкасси шкулĕнчи Анна Кузьмина тата Оксана Павлова пĕрешкел чи пысăк балсем пухнă.

Пур 315 выпускник та алла аттестат тата пĕрлехи патшалăх экзаменĕсене тытни çинчен свидетельство илчĕç.

**А. ЛЕСКИНА, районти вĕрентӳ пайĕн тĕп специалисчĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Мăн Сĕнтĕрти шкулта вырăс чĕлхипе экзамен пырать.**

Ялта ятлă-сумлă

# Тава тивĕçлĕ ветеран

Петр Исаевич Исаев тесен ăна Хорнуйпа Муркаш тăрăхĕнче кăна мар, районĕпе те нумайăшĕ аван пĕлет. Вăл Чăваш Республикин халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерессин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

Петр Исаевич Хорнуй ялĕнче 1934 çулта июлĕн 22-мĕшĕнче йышлă çемьере



çуралнă. Çемьере вăл чи кĕçĕнни пулнă. Унăн ачалăхĕ Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче иртнĕрен çăмăл пулман. Икĕ пиччĕшĕ вăрçăра вилнĕ. Колхозра çамрăклах ырми-канми тăрăшнă.

– 4-мĕш класра вĕреннĕ чухнех суха тăваттăм,– аса илет тава тивĕçлĕ ветеран. Колхозра лашапа кĕлте те, утă-улăм та, тырă та турттарнă.

Хорнуй шкулĕнче 7 класс вĕренсе пĕтернĕ хыççăн Муркашри вăтам шкулта пĕлӳ пухнă. Муркаш шкулĕнчен 1952 çулта вĕренсе тухнă. Çулталăка яхăн çамрăк каччă район прокуратуринче секретарь пулса тăрăшать. 1953 çулта вара Петр Исаев Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумне вĕренме кĕрет. 1956 çулта вăрман ĕçĕпе ĕçлекен технолог дипломне алла илет.

Çамрăк специалиста Сосновкăри вăрман заводне мастер пулса ĕçлеме яраççĕ. Ун чухне Шупашкар ГЭС-не тума пуçланă пирки Атăл хĕррипе вăрман тăрăхне каснă пулнă.

Ватă амăшĕ килте пĕччене пулнăран 1959 çулта тăван яла таврăнма тивнĕ. Яла килсен колхозра ĕçленĕ, клубра та заведующи пулса тăрăшнă. Çав вăхăтрах çурт-йĕр те çавăрмалла пулнă. Çав çулхинех Вăрмар районĕн хĕрĕпе Зоя Семеновнăпа çемье çавăрнă. Питĕ шел, Зоя Семеновна 2000 çулта йывăр чире пула пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайрĕ.

1961 çулта П.И. Исаев Мăн Сĕнтĕрти промкомбинатра вăрман мастерĕ пулса ĕçлеме тытăнать. Каярахпа кирпĕч цехĕнче çулталăка яхăн аслă мастер пулса тăрăшать. Часах пултаруллă арçынна тĕп инженера лартаççĕ. 1964 çулта вара Муркашри халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерекен комбинатăн директорĕн должноçне йышăнать.

– Тĕрлĕ цехсем ĕçленĕ вăл вăхăтра: çĕвĕ цехĕ, трикотаж цехĕ, Турай ялĕнче çăкăр пĕçерни, кĕсел тунă, Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Вăрманкассинче çунасем тунă, вăрман каснă, чăпта çапнă т. ыт. те,– каласа парать П.И. Исаев. 31 çул хушши пĕр чарăнмасăр туртать вăл директорăн йывăр лавне, тивĕçлĕ канăва кайиччен.

Пенсие тухнă хыççăн тепĕр икĕ çул директор çумĕ пулса ĕçлет. Пĕтĕмĕшле ĕç стажĕ унăн 45 çул. Ăçта кăна пулман пуль вăл çак 45 çул хушшинче, кампа кăна курнăçман пуль.

Правительствăн тĕрлĕ наградисене тивĕçнĕ. Хисеп грамотисене шутласа та пĕтереймĕн: район администрацийĕн те, Чăваш Республикин те, Раççей Федерацийĕн те пур. Вăл шутрах «Ĕç ветеранĕ» медаль те.

Чăннипех мухтанма пултараççĕ ачисем ашшĕпе. Икĕ ача пăхса çитĕнтернĕ Петр Исаевичпа Зоя Семеновна. Иккĕшĕ те аслă пĕлӳ илнĕ, вĕсем те халăх хушшинче хисеплĕ çынсем. Асли Светлана Петровна районти тĕп больницăра ачасен уйрăмĕн заведующийĕ пулса ĕçлет, вăл педиатр. Кĕçĕнни Сергей Петрович ял хуçалăх институтне пĕтернĕ, инженер-механик ĕçне алла илнĕ.

Кĕçех Петр Исаевич 75 çулхи юбилейне паллă тăвать. Ачисемпе пĕрлех кĕрекере 4 мăнукĕ пулĕ. Икĕ мăнукĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренет, тепĕр иккĕшĕ вара Муркашри вăтам шкулта ăс пухать.

75 çулта пулсан та Петр Исаевич килте ĕççĕр лармасть. Ялти çын валли ĕç нумай тупăнать килтĕрĕшре. Уйрăмах çулла. Пахчара та тăрмашать, выльăх-чĕрлĕхне те пăхмалла. Çак ĕçсене тума ăна кинĕ Светлана Алексеевна та пулăшать. Светлана яланах сăпайлă, кăмăллă, хуняшшĕ пекех ĕçчен.

**Н. БОРИСОВА, Хорнуй библиотекин ертӳçи.**

Кĕскен

# Вăтам ĕç укçи

Районти пĕчĕк предпринимательство шутне кĕмен организацисенче иртнĕ январь-май уйăхĕсенчи вăтам ĕç укçи 8117,8 тенкĕпе танлашнă. Ку пĕлтĕрхи çак тапхăрти вăтам ĕç укçин калăпăшĕн 99 процентĕ пулать. Çакăн йышши организацисенче пурĕ 5817 çын ĕçлет. Пĕлтĕр вара ĕçлекенсен шучĕ нумайрах пулнă.

Чăвашстат пĕлтернĕ тăрăх, республикипе илсен, кăçалхи пилĕк уйăхри вăтам ĕç укçи 10859,8 тенкĕ чухлĕ пулнă. Пĕлтĕрхипе танлаштарсан, ĕç укçи вăтамран 4 процент чухлĕ ӳснĕ.